**Клавдия Вишневская**

# Ӑйли пулмӗ тарçӑ

1985 15 2000

çул

Культура вучахӗнче

Ака уйӑхӗ, 2000 çул
Шупашкар



Клавдия Ивановна Вишневская Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕнчи Шăнар ялĕнче 1955 çулта çуралнă. Аспирантурăран вĕренсе тухнă. Вăтăр çулта сăвăсем çырма пуçланă. Вăл 1992 çултанпа Раççей журналисчĕсен Союзĕн тата 1995 çултанта Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ. Ачасем валли «Асанне юрри», пысăккисем валли «Тасалăх пур çĕн ĕмĕрсен...» пичетленнĕ кĕнекесен, тĕрлĕ сборниксенчи сăвăсен, калавсен тата темиçе теçетке юрĕсен авторĕ. Çавăн пекех К. Вишневскаян Чăваш кĕнеке издательствинче ачасем валли «Тăм шăхлич», пысăккисем валли «Каçхи урам» ятлă кĕнекесем пичетленсе тухмалла. Ал çырăвĕсене издательствăна леçсе панăранпа плана кĕртнĕ, апла пулин те укçатенкĕ çитменнине пула унти сăвăсем 10 çул хушши кун çути кураймарĕç. Кăçал поэтессăн творчество вучахĕнче 15 çул вăй хунине уявлама Чăваш кĕнеке издательстви çĕнĕ кĕнекесемпе автора тата вулакансене савăнтарма парне тăвасса шанас килет.

*Чăваш поэчĕсен поэзи секцийĕ.*

## АТТЕ...

Йывăр кун-çулу
Юлчĕ масарта.
Ырă кăмăлу —
Пирĕн сăнарта.

* * *

Çын тарла-тарла ĕçлет:
Наркăмăш тухать-мĕн тулалла.
Епле вырнаçнă,
Çапла тухать...
Çавăншăнех тивет-çке
Ĕмĕрĕпе çанă тавăрма.

## МАНАС ÇУК

Тăван аннем аякра,
Пĕрле пулма майĕ çук.
Ан пул уншăн эс кăра,
Сана эпĕ манас çук.

Ăшăтать çын тĕнчине
Çурхи хĕвелĕн ăшши.
Асилтерет ăшă чунне
Ырă çын-анне кулли.

Çăка çулçи сарăлать,
Хĕвелĕм савса пăхсан.
Чун-чĕре ман савăнать,
Аннеçĕм сывах пулсан.

Тăван аннем аякра,
Пĕрле пулма майĕ çук.
Ан пул уншăн эс кăра,
Сана эпĕ манас çук.

* * *

В кувшине розовом —
С розами букет.
Компьютер кодовый —
Человек дублет.

## ÇĂЛТĂРСЕМ СЎНМЕ КИЛМЕÇÇĔ

Йăмрасем çĕрсе пĕтеççĕ,
Юмансем пĕтеççĕ хуртланса.
Çăлтăрсем сўнме килмеççĕ,
Йывăç пек каймаççĕ хуралса.

Çавăнпа кашни ăмсанĕ,
Çăлтăрсемшĕн пурнĕ шутласа.
Çаврăнсан та çил-тăманĕ,
Ан хуплатăр çамрăк чун-ăса.

Вырăнта тăмасть тăманĕ,
Пĕр килсен те вăл часах каять.
Çăлтăра тăшман ăмсанĕ:
Йăл кулсах ăна такăнтарать.

Никама та ыр тăваймĕ:
Чунĕпе тăшман сар шĕкĕ пек.
Çĕнтерме çунать хăватлăх —
Эпĕ çутă — çĕлтăрлă ĕçпе.

Йăмрасем çĕрсе пĕтеççĕ,
Юмансем пĕтеççĕ хуртланса.
Çăлтăрсем сӳнме килмеççĕ,
Йывăç пек юлмаççĕ хуралса.

## ÇЫН ЧУНĔНЧИ ТĔСЕ КУРАТĂП

Тăван çĕршыв чуна килмерĕ,
Хăй ытамне пĕрре илмерĕ:
Те ман сасса вĕл илтеймерĕ,
Те ... чун юррине килĕштермерĕ.

Ача чухнех йăлтах туяттăм,
Çĕршывăм, чăн та, йӳçĕ ватлă.
Çын чунĕнчи тĕсе кураттăм,
Çавăншăнах-мĕн ылханатчĕç.

Çитсе пырать усал ылханĕ?!
Пусмассерен эп такăнатăп.
Чуна илесшĕн — парăнмастăп,
Çынна сутасшăн пурăнмастăп.

## ШУХĂШ

Çĕн кун пуçланнă ир
Куç уçăличчен
Пуçра шухăш —
Усалсене эс сир
Эп вăраничченн.

Хаяр сămах — суран çине — тăвар;
Манăн шухăшри
Чуна хăтар,
Тăшманран эс тарт,
Ырлăх сывлăмри.

Кала, ятла халь эс,
Пĕл пĕлменнине.
Тăшман ятне пĕлмес,
Пĕлессĕм те килмест.
Тав ырă шухăшне.

## ПУРĂНĂÇ

Йÿççе тăран чуста евĕр
Пурнăç халь пăтрашура.
Анчах шуралнă çÿçĕм евĕр
Çамрăк чун кăвакарать.

Ăçта çитсе çапăнатпăр
Кун пекех лапăртура?
Сÿнме пĕлмен Çĕршыв «пушарĕ»
Çап-çарах-çке хăварать.

Хам çарамас — нимех те тейĕн —
Анчах ачам та «пушарта».
Эпи карчăкăм-кинемейĕм
Укçа шутлать халь çĕн ларта.

Пурăнать кашни пĕчченĕн!
Çĕр е пĕлĕт — мĕн пĕлет.
Кам çак пурнăçа ĕненнĕ,
Унăн чунĕ тухнă ав кĕлле.

Эпĕ мĕншĕн кулянатăп?
Коммерсант лĕх-лĕх кулать.
Пĕлнĕ-пĕлмен — ячĕ мастер —
Укçа сăрхăнать алла.

Банкирсен ÿсет укçийĕ,
Пĕлмĕ вăл шутне нихçан.
Анчах пур-ши ун уссийĕ,
Шучĕ çунтарать пулсан пуçа.

*27.11.98 ç.*

## ЧĔРЕ ЮРРИ

Кашкăртан хăранă пек
Вун виççĕрен хăрать этем.
Йăх пуçне пĕлмест тăван,
Çавăнпа, тен, ыттисем пек.

Кашкăра тукмак тесен,
Хисеплени те юратни.
Ыр юрра манать чăваш
Шалтан йăвашланса çитсен.

Манăçа тухать йăлтах:
Вырăсла пурнать чăваш.
Пит хăрать вун виççĕрен —
Тĕлĕнтерет-иç вăл шалтах.

Хăрамастăп кашкăртан,
Вун виççĕне те юратап.
Çакăнтан туятăп эп:
Чĕре юрри ку — чăвашран.

## ПУРĂНАТПĂР...

Йĕрлесе те тухаймăн,
Пĕлсен те тупаймăн
Хальхи пурнăç тупсăмне —
Бюрократăн чир-чĕрне.

Пурте ăна пĕлетпĕр,
Çавна пулах чирлетпĕр.
Çапах пĕрле савăнса.
Пурăнатпăр ал парса.

Сăмах тупса ваклатпăр,
Хыçа юлсан касатпăр.
Умма тухсан хăраса,
Кăшт илетпĕр пуç тайса.

Çук пурнăса хаклатпăр —
Ыранхишĕн хăратпăр.
Хăçан пурнар савăнса,
Чун ăшшипе йăпанса?

Кашни çыннах халь курăр,
«Кĕве çиет. Ах! Турă!»

Бюрократа çул парса,
Пурăнатпăр макăрса.

## «ÇĂХАНĂМ»

Çӳлте çӳрен çăханăн
Сасси чуна çурать.
Чуна пит варлаканăн
Чĕри епле хура.

Çӳлтех çӳре, çăханăм,
Кунта сана никам кĕтмест.
Хурах юлсам, тăшманăм,
Сана шур тĕс витмест.

## САРРИ-ТУТТИ...

Ăшши-пăшши кăларать
Мунча кĕрен шăши.
Кунта вăл лекнĕ ăнсăртран:
Хуçа мунчийĕ шăтăкран.

Кĕçех тухасшăн вăл унтан:
Ăçта-ши тухмалли?
Тасалнă хыççăн кăмăлтан
Улах тăвасшăн вăрманта.

Тасалăх мар халь ун кирли —
Выçать-мĕн хырăмĕ шăшин.
Çук кунта вăрламалли,
Шырарĕ те тупмарĕ çимелли.

Шăши шутлать «пуç çавăрсах»:
Темле пулсан та тухмаллах.
Мунча çĕрне чаваласа
Варларĕ çунă çурăмне.

Анчах мĕн тăвăн,
Тивет вараланма —
Хырăмшăнах-мĕн тарлама.

Çынна та тивнĕ çавăн пек шăпа —
Сарри-тутти — çан-çурăм тарласан.

## ПАТТĂР АВТАН

*(Чăн пулни)*

Чăваша вĕрентнĕ мĕскĕнленме,
Пуçлăха аякран пуç тайса итлеме.
Çын чунне пăвса, алла илсен,
Йыш хушасшăн çĕн çын пĕлсе
Хăратаççĕ пушă сассипе.
Сасси мĕне тăрать —
Юн чуппинче суха тăвать.
Чун куççульне тумлатса,
Ӳтĕме шăнтса
Хуçасшăн ырă кăмăла
Пăрахаççĕ йĕплĕ çăтмаха.

Чун-чĕре анинче пулать халь ашкăнма:
Çын пĕччен пулсан, пĕр суд та саншăн мар,
Никам та тупăнмасть хӳтĕлекен —
Пулмасть чун мăйлă хăй ятне ӳстерекен.
Ак хистерĕç каçару ыйтма,
Ĕçтешсемшĕн суккăр пурăнма.
Йăнăш утăм туманран,
Çын чунне нихçан та сутманран
Итлеме вăй-халăм çук.
Тăратрĕç суд умне чуна илме,
Тăвасшăн халь манран чăн-чăн мемме...

Суд ĕçне пуçарнă сăмах вакланăран:
Ял советĕнче кинеми макăрнăран
Эпĕ карчăка хӳтĕлесе
Кăштах çаптартăм сăмахпа
Ăна кӳрентерекене.
Хĕл кунĕ ларнă вăхăтра
Çаплă эп çыртăм хаçатра:
«Паттăр автан» пулать кашни ялтах
Çунатли мар, икĕ хăлхалли.
Ку килĕшмен ял паттăрне,
Ытларах — райхаçат редакторне.
Васкать вăл хăвăртрах ĕçтешрен хăпма,
Çын аллипе вĕри кăвар туртма.
Ĕçтеш ятне «шыва ярас» тесе,
Корреспондент суя çырать тесе,
Судри тăванĕпе канашласа,
«Паттăр автана» шелленĕ пек пулса,
Ăна хушать çăхав çырма суда.
Вăл тупнă такăр çул унта.

Çăхавĕ-мĕнĕ темех мар,
Тур çырлах!.. Судьясем тăн-тăн мар —
Редактор куç пăвнă вĕсене.
Çапла, тен, пухаççĕ суд-фонд хасине?
Судьясем хăратаççĕ саккун чĕлхипе,
Эпĕ преступник тейĕн вĕсен шучĕпе.
Мĕнех... ăна та чăтан,
Ĕçтешсем кулнине чăтсан,
Йывăр мар «саккунпала» суд туни.
Пĕр çак «паттăр автан» ĕçне
Тăсасшăнччĕ пĕр çул патне.
Мана хурасшăн «вĕлтрен ачи» вырăнне
Татса чун, нерв хĕлĕхĕсене.

Унччен те пулмасть, таçтан пĕлтерӳ:
Саккуна сĕмсĕр пăсакансене тĕрĕслеççĕ!..
«Сиксе тухаççĕ чĕрисем»
Хайхи çак пӳтсĕр судьясен,
Саккунпала сĕмсĕр пурăнма вĕреннисен.
Тарма шутлаççĕ кам ăçта пĕлет çавăнталла:
Пĕри ĕçрен шăвăнтарать,
Тепри тараймĕ: «тăрă шыв тытса чарать»,
Виççĕмĕш ырать кравать пульницăра,
Тăваттăмĕш пехлет эрех çине сăра.
Мехел çитмерĕ суд ĕçне «автан» пирки
Çулталĕк тăршшĕ тăсасси.
Ак ăçта вăл тĕрĕслĕх çынпа;
Суд ĕçĕнче юрлаççĕ баянпа.

## МИЛИЦИОНЕР

Паян вут чуль çунан кунра
Ĕçлекене чун çук санран —
Хĕртсурт пекех милиционер —
Вут ами — миллионер.

Ăçта пăхан, унта «пушар» —
Кашни çыннах — типшар.
Ним пулмасан та тупăнать,
Усалăн пур пăшалĕ, хăямат.

Укçа тĕнчи алхастарать,
Астарать милиционера.
Ăçта паян ахаль çынна хӳтĕлеме:
Миллионер — кирлĕрех этем.

Яш-кĕрĕм халь выçах, укçа пăвать майран,
Пуянсене кăна ташлаттарать.

Милиционер ҫакна-мӗн пит кӗтет:
Виҫесӗр эрехпе ҫын ӳкетех.

Ӑнсӑртран, вӑл ӳкмесен,
Ӑна илет «чӳлмеклесе».
Туллать ӑна йытӑ пекех —
Астума ан пӗлтӗрччӗ текех.

Ах! Ах! — Ах, ах тӗнчи!
Кама пулать-ши ҫын тӗнчи?!
Ахаль ҫынна тусан этем тарҫи —
Кама камран-ши хӳтӗлӗ вӑрҫи?

## ЧӐВАШӐМ

Чӑвашӑм-тӑванӑм,
Мӗн пулчӗ сана?
Шыв сыпнӑ, тӑратӑн —
Эс мӗскӗн ача яланах!

Чӑвашӑм, «сӑпкашӑн»
Ан хыпӑн ялан:
Пуласлӑх ачашӑн
Сӑпка — кирли мар!

Хуҫа сиктерет халь
Ухмах сӑпкине.
Чӑваш тӗлӗрет-ха ,
Сирмест ыйхине!

Чӑвашӑм-тӑванӑм!
Вӑран ыйхӑран.
Вара эс ӑнланӑн —
Хуҫа мар вӑйлӑрах.

Ҫитет халь, чӑвашӑм.
Пур вӑй кӗрешме!
Ал ан пар, тӑванӑм!
Ҫитет мирлешме!

Кашни мӑшкӑл тӳснӗ
Пӗччен пулнӑран.
Пайтах ҫинӗ «пӳсӗр» —
Йӑваш курнӑран.

Тӑванӑм, тек ҫитӗ!
Кар тӑр кӗрешме!

Ултавлăх тек ирттĕр
Килер çĕнтерме!

*28.04.1998 ç.*

## ЕНТЕШ

Епле хаклă иккен вăл ентеш,
Çывăхран та çывăх, вăл — кунти.
Пите хĕвел шевли çапнă пек
Алă парса ентеш чуп туни.

## ЕНТЕШЛĔХ

Ентешсем пухăнсан пĕр çĕре
Сÿтсе явма пурра-çукка.
Ман чун таш ташласа ĕлкĕрет:
Кунта пурте — аппа, кукка.

Кашнинпех эп юнашар тăрса
Ялан хавас юр юрлама.
Ĕçсем пырсассăн халь ăнсах,
Манма пултарăн эс кама?

Пĕрне пĕри ырă сунсан,
Ентеш юррийĕ шăранать:
Епле-ха юрламастăн кăмăлтан,
Хальчи хакли ентеш пулсан.

Сумлă ят та иккен вăл ентеш,
Çакна халиччен те пĕлмен.
Пĕрле пухăнсан пур тус-пĕрлеш,
Юрăран пуçланать ниме.

Тин çеç пиçнĕ вĕри çăкăр пек
Ентеш ăшши. Килĕшÿре
Пырсассăн туслăх ĕмĕрпе
Тăван тулать ентешлĕхре.

## ПĔЛЕЙМЕРĔМ

*Кирилл Кириллова аса илнĕ*
*çултталăк кунĕнче çырнă.*

Чуну тинĕсри шывпа пĕрех,
Тем хумханать,

Тек пăтранать.
Тепĕр вăхăт сан сăнра
Çырана шыв çапнă пек
Сив хуму чĕрене çапать.
Пĕлеймерĕм мĕншĕнне,
Кураймарăм чун сăнне.

Пит-сăнпа ялан таса чипер.
Йăл, кулан та
Ыр кун сунан.
Ăшунта чĕре вĕрет,
Шухăшран сив тар тапать.
Сив хуму чĕрене çапать.
Пĕлеймерĕм мĕншĕнне,
Кураймарăм чун сăнне.

Калан сăмахран куççуль юхать:
Ют çын-тăван
Тăварлах мар.
Çавăнпа пуль ăнланман
Юлташу — пĕр савнăçу.
Сив хуму чĕрене çапать.
Пĕлеймерĕм мĕншĕнне,
Кураймарăм чун сăнне.

* * *

*Леонид Павлович Сергеев*
*профессора халалласа*

Чăвашшăн виç хĕвел пăхать пулсан,
Тĕнчи те унăн темиçе.
Пуян çĕршыв пуян ăса савса
Пăхтарнă хĕвелне виççех.

Хĕвел кулли шевле пек курăнсан,
Ăшши анать çак тĕнчене.
Чăваш ачи тупта-тупта ăса,
Çырать кирли кĕнекене.

Ан тив, чăвашăн пултăр виç хĕвел,
Вăл кирлĕ, тен, пулма чипер.
Виç çутă çутатсассăн пĕлĕве —
Эпир ют мар профессор пиччепе.

Асли пулса яланлăх тĕслĕхре
Чăвашшăн-çке уçан çĕн çул.

Эсир — ăстаçă — çитмĕлре,
Пурнайăр тепĕр çавăн чул.

*3.06.99 ç.*

## ВĂЙЛИ ПУЛМĔ ТАРÇĂ

Эрехе пĕлетпĕр:
Пур-çукки — пĕрле.
Вăйсăрри — кĕлентĕр.
Чунсăрри кĕрлет.

Эх, эрех, эрехĕм!
Ĕçем-ши сана?
Пуç, çухал — пар техĕм,
Эрехлем чуна.

Эс тăхта, ултавçă,
Пăрăн-ха манран.
Пĕр пулсассăн тарçă —
Хăпас çук санран.

Тус пулмарăм — тавăр,
Ирсĕр чун илли!
Вăйли пулмĕ тарçă,
Айванни — пулин.

## ТĂВАН

Тăван паха халь тăвартан
Теме пулать-ши кăмăлтан?

Тăван тăварлă тăвартан —
Апат каймасть тăварлăран.

## ЧĔРЕ КАНТĂК ПЕК

Кантăк пек чĕрем
Юратмасть хĕснине.
Ванса çĕмĕрлет самантрах,
Çапла тухать юрăхсăра.

Чĕре ун пек пулсан,
Кун-çул ăшши пĕтет.
Кама мĕн-ши çитет?

Çутă кантăкпа
Пурте илемлĕрех.
Çын чĕри те çаплах,
Вăл кăна сăн парать.

Чĕре сывах пулсан,
Кун-çул таппи пĕтмест,
Нихçан вилес килмест.

## ЧĔЛХИ ÇЫНСЕН...

Чакак сырпа сăйланнă чух
Тилле те илĕртет.
Çакна тахçан сăнанă чун
Курас темест пĕрне те.

Анчах çынна пайлаççĕ, тет,
Чунне пăсса-ши, е?
Çынна виçсе хураççĕ те
Вырнаçтараççĕ «алсише...»

Чĕлхи çынсен ... паклаççĕ-тĕр,
Суйлана тиркемеллине.
Камне калам — пĕлетĕр:
Чи вăйлине те чунлине.

## КУН-ÇУЛ

Туйсан ĕç шăршине
Чун пулать урăхла.
Хĕрхенет çын чунне
Пулаймасть усалах.

Çимелли çук чухне
Çăкăр та пит паха.
Тар шăршиллĕ мулне
Çын хаклать чăнахах.

Çын пурнан саккуна
Шутласа кăларман.
Иртме çук-мĕн хăвран —
Кун-çулри арманран.

Аларман çаврăнать,
Хăйранать măн вут-чул,
Çаврăнать-çке кун-çул.
Макăртать ман чуна
Ĕçлекен чухăн чух.

# ЧĂВАШ НАЧАР МАР ХАЛĂХ

*Сталина Петровнăна тата Роберт Михайлович Васильевсене халалласа.*

Çурхи хĕвелпе ăшăрта та ăшăтнă,
Чипер чăвашăн чунĕ ăшлăхра.
Анчах ăна камах курасшăн тăрăшнă
Сăпай ачийĕ пит вăтанчăкран.

Çумма ларсан сăмах-юмах та кăмăллă,
Ĕçри ĕçчен — малти ретри чăваш.
Епле ĕçчен — пуянлăх çук — кăмăлсăр,
Çавна пулах курнан-ши эс йăваш?

Чăваш суран чунне сахал-им вăтăрнă,
Ăна витесшĕн «мĕскĕн» сăмахпа.
Çӳпçепелен сăмах купи те сăтăрнă
Вăйли хупласшăн сăтăр шухăшпа.

Анчах чăваш ачи начар мар халăхăн,
Чунне сутасшăн мар вăл пуçтаха.
Ытла чипер пулни ун — çын пахалăхĕ:
Сăпайлă чун тухаймĕ ăçтаха.

* * *

Пăлтăр-пăлтăр
Пăлтăрпи.
Кун пек ятли те
Пур-и?
Пăлтăр-пăлтăр
Пăлтăрпи,
Эсĕ мар-и пăлтăрти?

* * *

Лĕпĕш пулас марччĕ:
Кĕрхи кунсем çитсен,
Вилсе выртас марччĕ.

* * *

Ют çын кулса каланă сăмахсем
Ĕмĕрлĕхех чуна чаваççĕ.
Пĕлекенсем ыраттарма каланисем
Таçта кайса çухалаççĕ.

* * *

Кулăшран купăс тăваймăн,
Савмасан савни пулаймăн.

## «КĂВАК ХУППИ»

Тĕлĕнтеретĕн эс, тусăм, мана
«Кăвак хуппи» пур тесе.
Пур улталакан сана — самана,
Вăл тăрать ăса виçсе.

Эс, тĕлĕнмелле тусăм, хăçан,
Ăçта канса куртăн-ши?
«Кăвак хуппи» уçăлать хупсан куçа,
Кĕтен телей саншăн-ши?

Эс тĕлленмен тĕлĕк нумай,
Татах нумай курмалли.
Тӳпе хуппине çын туман:
Ытла çӳлте телей палли.

## ТУРĂ ПУРАХ

Турă пурах,
Таçта — курăнни, курăнманни.
Пĕлсе тăрать,
Кӳренет,
Çылăха виçсе каçарать.
Эй, Турă,
Эсĕ кур.
Эп ĕненетĕп,
Эсĕ пур.

* * *

Çич ют тăван
Кирлех-ши вăл?
Çич ют юнран
Тăваймăн ыр тăван.

## КĂМĂЛ

Тĕк пек çемçе те çăмăл
Шухăшсем вĕçеççĕ те вĕçеççĕ.
Чипер кунсем, ыр кăмăл,
Сар хĕвел сана та илĕртеççĕ.

Чунри хĕвел те сарă:
Чун варли пурришĕн питĕ савăк.
Куран, савни, эп — парăм,
Эсĕ чăнласах юрланçă кайăк.

Санпа ытла та çăмăл,
Шухăшсем вĕçеççĕ те вĕçеççĕ.
Каçсем, кунсем те — кăмăл;
Савнăçа ютсем çеç кĕскетеççĕ.

## ВĂРАН

Шăвать ăпăр-тапăр шухăш
Тӳпери пĕлĕт татăкран.
Çынсен тарăн-тарăн шухăш,
Тарăнланать вăл тамăкра.

Тухать хĕрлĕ шуçăм. Кантăк
Хупланман хура карăпа.
Хуçи лайăх, ыррăн кантăр —
Ан нушалантăр тăвăрпа.

Чăваш эсĕ чĕр сисĕм: шуçăм
Курăнать вăраннăран.
Çути шухăша çапрĕ уççăн:
Чăваш, тĕлĕрме эс пăрах.

## ЯЛТИ УРАМ

Ялти урам вылять çăлтăрсемпе,
Чĕнет яшсене савăнма.
Хитре хĕрсем те каччăсем тем пек
Хитрелетеççĕ урама.
А-а-а, хитрелетеççĕ-çке урама.

Эпĕ ӳснĕ урам чи ватти,
Унпа танлашаймĕ йăмра.
Ав янăрать урам çурçĕрти,
Мĕн-ма-ши кăнтăрти шăпах?
А-а-а, мĕн-ма-ши кăнтăрти шăп ларать?

Туйса ялти урамăн тунсăхне
Тухатăп эп те урама.
Кулли ун «çăтать çăлтăрсене»,
Хитре кунта улах ларма.
А-а-а, хитре-мĕн кунта улах ларма.

Ялти урам вылять çăлтăрсемпе,
Асамлă манми çутăпа.
Асап йăпатрĕ асилÿпе;
Ялта пулмарĕ ман шăпа.
А-а-а, ялта пулмарĕ-çке ман шăпа.

## ПИЧЧЕ

Ма эсĕ кÿренен, пиччем-тăван:
Эп пуррине çук пек тăван.
Çыран хĕррисене уйăрнă пек,
Пурнан аннÿн хĕрне курмасăрах.

Тăван юнран эпир санпа кăна,
Пиччем, ан ман эс хăвăн йăмăкна.
Эс пуррине ялан асра тытап;
Атте юратнă-çке çапла ытар.

Эсир чĕнсен хăна-вĕрле килне,
Ан манăр-ха сирĕн йăмăк пуррине.
Мĕн пур-çукка эп пайлăп сирĕнпе,
Юратнă ман пичче, тăван, инке.

## ÇЫРМАН КУНСЕҪЧЕ

Çырман куна эп курaймастăп:
Уссăр пурăнатăп.
Çырсан та усă курaймастăп.

Мĕншĕн тарăхатăп?
Чĕрере тулли
Мĕн-ши?
Йывăр-йывăр çав тери
Мĕншĕн-ши?

Уссăр иртнĕ кунсенче
Хăвăрт ватăлатăп:
Çутă кунлă ыр тĕнче
Кахал çыншăн латсăр!

## ЫЙТУСЕМ

Ваттин-вĕттин
Кулли, куççулĕ
Курăнать мана.

Хăшĕ-пĕрин
Таса кун-çулĕ
Вараланать кăна...

Чун тумламĕшĕн,
Çын чĕрийĕшĕн
Ман чун йĕрет.

Ыйту çитет çĕре:
Çак пурнăç ассăр-и?
Эпĕр ăссăр-и?
Ма хурататпăр
Этемлĕхĕн йĕрне?

## ШУРĂ ЁМĔТ

Аран тăрап вырăн çинчен
Сăнсăр ватă çын пекех.
Юри çапла тăван тесен,
Кӳренетĕп халь эпех.

Мĕн тума çапла суяс халь
Манăн вăй çукки çинчен?
Эмелпе çын сывалмасть-ха,
Юрату çитмест çынсен.

Çут çанталăк пăрахмасть-ха —
Пĕр хĕвел пĕр пек кашнин.
Юрать-çке çав парать вăй-хал —
Юр йĕрет: шурă ёмĕт — савăнни.

## КИВĔ ТУСĂМ

Эс ялан асрах, ман кивĕ тусăм,
Сăнсăр шурă тĕлĕкре пурнан.
Тен, аса илни те пулĕ уссăр,
Ырлăх, усă пулĕ-ши кайран?

Уссăр пурăнман тесе шутлатăп:
Икĕ кăйкăр ав тĕрекленет.
Сансăрах пулма пултартăм паттăр,
Çитĕ-ши телейĕ чĕрене?

Тĕлĕнетĕп туйăмран, савниçĕм,
Эсĕ маншăнах чăн çуннине.
Асилсен тута çырла пек пиçĕ,
Тĕлĕкре çеç курăп телейне.

## ВИҪҪĔМĔШĔ ЫТЛАШШИ

Ҫуталать сăн ҫуттăн
Уйăхпа пĕр пулнăн.
Эсĕ мана саврăн.
Эпĕ сана саврăм.
Виҫҫĕмĕшĕ ытлашши —
Эпир пулар каҫ патши.

Ҫутăран та ҫутă
Уйăхпа эп утăп.
Эсĕ маншăн пултăн,
Эпĕ саншăн пултăм.
Виҫҫĕмĕшĕ, ан шарла,
Хăвна валли чун шыра.

Хăпарать шур шуҫăм,
Ҫĕнĕ куншăн савăн.
Эсĕ маншăн пурнăн,
Эпĕ саншăн пурнăп.
Виҫҫĕмĕшĕ ăҫта халь?
Юпах тиха шырать-ха.

## МЕЛСĔР ҪĔРШЫВĂМ

Пĕр тумлам шыв ĕҫмесĕр
Куҫăмра мĕн шывĕ?
Пулчĕ-ха питĕ мелсĕр —
Ҫук Тăван Ҫĕршывăм:
Тумлампала шыв парать,
Куркапа сăрăхтарать.

## ХАКЛИ НИКАМ ТА ҪУК...

Эс пĕлен ҫĕр-ҫĕр ҫынна,
Эп пĕлетĕп пин ҫынна.
Апла пулин те
Сан чунунтан хакли
Никам та ҫук.

## ӲКРĔ СИВĔ ТĂМ

Сив ҫил тăманĕ ирпелех
Туйнăран ҫын сиввине.

Сив тăм ӳкрĕ чĕре çинех —
Савни савать урăххине.

Ирхи тĕтре. Ăçтан пĕлес
Хăçан-ши вăл сирĕлнине?
Кама кăна савман-ши эс?
Ан хуç чечек пек чĕрене.

Сив тăм выртать ман чĕрере,
Епле упрас сан çеçкӳне?
Пăрланнă чун сивĕнтĕрех,
Эс çитмĕн, тусăм, çĕннине.

## ÇĔНĔ КӲМЕ

Сар чечек — хитре пике,
Епле пулма пĕлнĕ-ши?
Кăвак куç-шăрçа, çеçке.
Епле пулма пĕлнĕ-ши?
Э-эх! Епле пулма пĕлнĕ-ши?
Амăш чипер пулнăран.

Сарă пике çулĕпе
Вун çичче çитрĕ паян.
Лаша кӳлнĕ ашшĕпе
Пике каять халь ялтан:
Э-эх! Пике каять халь ялтан
Вăхăтпа тан çын пулма.

Çĕнĕ кӳмере пике,
Çулĕ епле пулĕ-ши?
Кӳршĕ каччи, ан тирке,
Ун пекки эс тупăн-ши?
Э-эх! Ун пекки эс тупăн-ши?
Сана мăшăр пулĕ-ши?

Çĕнĕ кӳме ярăнать —
Пике каять хулана.
Çĕнĕ çул — парне — сана,
Ан çухат эс шанчăкна.
Э-эх! Çĕнĕ кӳме ярăнать,
Пике хулана каять.

## ЮРАТУ — ВĂЛ ÇУТĂ ÇĂЛТĂР, ÇĂЛТĂРА ТЫТАЙМĂН НИХĂÇАН

Шав çиллĕ тĕттĕм ир,
Кĕрхи куна куратăп,
Сар çулçă пек эпир:
Юрату сăмах та ватă.

Кĕрхи кунсем иртсен,
Пулать шап-шур кавирĕм.
Шевле тулан кунсем —
Пуласлăхра çут ирĕ.

Пуласлăх ватăлмасть,
Хĕвел шевли пайланнăн.
Иртнишĕн макăрмас:
Пулассишĕн чунăм паттăр.

Эп савнă мăшăра
Мĕнли кăна савмарĕ...
Чĕреçĕм шăплăхра
Куççуль, куç тĕкне шутларĕ.

Чуна куççуль тивмест,
Кил, юрату хăвачĕ.
Ача-пăча — тĕкме,
Тутлах пиçет апачĕ.

Ак ӳсрĕç ачамсем,
Мана каларĕç: ырă.
Асамçă пил пӳрсен,
Аван пулать тĕш-тырă.

Саван савни çинчен
Ялан та эп шутлатăп.
Чĕре юлмасть пĕччен:
Пĕр йăнăш — каçаратăп.

— Кил, мăшăрăм, — тесен,
Юттисене мансассăн.
— Санах савап, — тесен,
Савас-им савăнмасăр?

Çапла пурнас кун-çул
Куççуль çулне пӳлейтĕр.
Пулас пурлăх — ăнăçу,
Ача-пăчам телей пичетлĕ.

* * *

Çĕр çине
Çылăх курма килетпĕр
Ма калаçатпăр
Çылăхлă тесе?
Çылăхсăрри пур-им?

## ВĂХĂТ МĔНШĔН-ШИ ИРТЕТ?

Çурçĕрте каç тĕлĕрет,
Манăн куçăм тинкерет.
Тĕмсĕлет, сăнна шырать,
Çĕнĕ сăвă вăл çырать.
 Ах, савни-савниçĕм,
 Вăхăт мĕншĕн-ши иртет?

Куç хупăнмасть, мĕн тăвас?
Ман чун санпа халь, тăван.
Чĕре çĕрле те калаçать,
Сана кăна ман чун савать.
 Ах, савни-савниçĕм,
 Вăхăт мĕншĕн-ши иртет?

Ах, савни-савни, килсем,
Ман сăмахсене илтсем.
Шухăшлатăп хам пирки,
Чун çунать-çке сан пирки.
 Ах, савни-савниçĕм,
 Вăхăт мĕншĕн-ши иртет?

## САВНИ — ПУРЛĂХ

Ак ăçта вăл ырлăх —
Тура панă пурлăх:
Савнине тĕл пултăм,
Савманни-мĕн — хурлăх.

Ак ăçта вăл ырлăх!
Улăхри чечек пек эсĕ.
Чунăм, илĕрт савнине:
Вăл ытарлă пурлăх.

Ак ăçта вăл ырлăх —
Савăшсан этемлĕх.
Пурăнан пĕрре çеç:
Савăнни — чăн пурлăх.

* * *

Чечек ҫинчен
Чечек ҫине
Куҫать пĕр лĕпĕш
Ҫине-ҫине.

Эп лĕпĕш мар,
Пĕр савсан,
Ҫав ҫын чунра —
Ĕмĕрлĕхех.

## НЕ ГОВОРИ ПУСТЫЕ СЛОВА

Клен сухой —
Так мороз зимой.
Все деревья сухие
«В зимней спячке спят».
Могу я тоже уснуть:
Не говори пустые слова.

## ЛАШАСĂР ПИКЕ

Йывăҫа туллать ав сивĕ ҫил:
Тухăҫран тухмасть хĕвел.
Ман чуна кăшлать ҫын тивĕҫи —
Алăра «кив чĕн йĕвен».

Эх, савни, савниҫĕм,
Йăнăш турăмăр:
Эс ҫухатрăн каччă тивĕҫне,
Эп ҫухатрăм Турă пехилне.

Ӳснисем телей ширанă чух
Суйласа илсе мана
Шанчăка кĕртсе эс патăн чун,
Халь ăҫта ширас сана?

Эх, савни, савниҫĕм,
Йăнăш турăмăр:
Эс ҫухатрăн каччă тивĕҫне,
Эп ҫухатрăм Турă пехилне.

Сапăр ҫул лаша ҫулне пӳлет
Ҫавăрасшăн ман пата.

Ман чунра сар хӗвел хуралать:
Савнипе телей каять.

Эх, савни, савниҫӗм,
Йăнăш турамăр:
Эс ҫухатрăн каччă тивӗҫне,
Эп ҫухатрăм Турă пехилне.

## АЙ-ВАЙ, САНСЕМ

Ай-вай, сăнсем —
Пирӗн сăнсем.
Маншăнах хӗвел тухать,
Саншăнах шевле вылять.
    Ай-вай, сăнсем —
    Пирӗн сăнсем,
    Чи телейлисем.

Савăнса савнипе
Пурăнасчӗ пиллӗхпе.
Чипер чунлисемпе
Ыр курасчӗ хӗвел пек.
    Ай-вай, сăнсем —
    Пирӗн сăнсем,
    Чи телейлисем.

Ав вӗтӗ ҫумăрпа
Ҫăвăнаҫҫӗ чечексем.
Манăн чунăм санпа
Сывлăм тӗслӗ, ӗненсем.
    Ай-вай, сăнсем —
    Пирӗн сăнсем,
    Чи телейлисем.

Ҫырусем пӗлӗт пек:
Шухăшсем-ҫке сан ҫинчен.
Хальтерех пӗлтерсем
Мăшăрланасси ҫинчен.
    Ай-вай, сăнсем —
    Пирӗн сăнсем,
    Чи телейлисем.

## САН ЯТУПА

Сана кăна курас тесе
Ирех эп тăтăм хĕвелпе.
Сана кăна курас тесе
Ирех шыв йăтрăм çĕклемпе.

Шăнкăртатса ав шыв юхать
Инçех те мар сирĕн патран.
Çав шыв епле тасан тухать,
Ман чун çапла саватъ ялан.

Хĕвелпеле тăрса ирех
Сан ятупа эп кун кунлам.
Санпа кăна ĕмĕрĕпех
Ялан телей курса пурнам.

## ИРĔК ЧУН

Улăхра ӳсен-тăран,
Чечексем те тĕрлĕрен.
Чун пурне те пĕлнĕрен
Мĕн ыйтас-ши ман унран?

Куç пăхать улăхалла,
Вăл хитре чечек суйлать.
Пĕр чечек лексен алла,
Чун туртать улахалла.

Улахра — мĕнпур каччи,
Эп пĕчченех юлăп-и?
Ман умра çук айăпли,
Ирĕк чун суйлатăр-и?

## ПĔРНЕ САВАТĂП

Кичем тени тĕп пултăр,
Тал пиçен пекех çухалтăр.
Чуна савни — чăн улăп,
Çулĕпе те вăл сухалсăр.

Хăп, тунсăх. Йăлт сиретĕп;
Вăл пурришĕн чунăм паттăр.
Пĕрне саватăп эпĕ,
Сакăр саспалли каратăп.

Эс илтетĕн-и, е çук,
Пурпĕрех ман чун хаваслă.
Эпĕ саншăн çеç ерçӳ:
Санăн вăхăтпа тăванлă.

## Я ИЩУ ТЕБЯ

Я ищу тебя во тьме,
Мотылек — как свет.
Я ищу тебя везде —
Могла же проглядеть?

Я ищу тебя в душе —
Алые цветочки.
Потеряла неужель
От тебя весточки?

Я ищу тебя везде
И в тумане, чуть в просвет.
Не найду тебя нигде —
Неужель погас уж свет?

Свет любви, тебя ищу —
Дождь — мой горизонт.
О тебе опять пишу —
А любовь как зонт
Закрывает горизонт.

## ЮРАТУ ПУРНАСШĂН

Юрату — вăл çутă çăлтăр,
Çăлтăра тытаймăн нихăçан.
Ĕмĕлки çеç чупĕ кăлтăр
Савнипе пĕр çулшăн тăрăшсан.

Юрату çулне тытмашкăн
Тилхепе те пулăшмĕ, ĕнен.
Юрату вăл хăй пурнасшăн
Ирĕкре çунатлăн та хитрен.

Эс унпа куçна çеç ăшăт,
Йăлтăрса илсессĕн вăхăтпа.
Сан чуну тӳпе пек йăштăр,
Савманни сана туймасть çапах.

Юрату — вăл çутă çăлтăр,
Çăлтăра тытаймăн нихăçан.
Ёмĕлки çеç чупĕ кăлтăр
Савнипе пĕр çулшăн тăрăшсан.

## САНА КĔТСЕ

Эп, сана кĕтсе,
Хурт пыл пухнă пек,
Чечек татса çӳрерĕм.

Эп, сана кĕтсе,
Усал ача пек,
Ялан йĕрсе çӳрерĕм.

Эп, сана кĕтсе,
Хĕрарăмран хĕр пулас пек,
Ялан пĕччен çӳрерĕм...

## МА АСТАРТĂН?

Кула-кулах чуна хускатрăн
Хĕвел шевли пек çуталса.
Усал ырри, ма астаратăн,
Чĕре алли пек ал парса?

Чăнах ĕнентĕм, пил те патăн
Мана кăна, хăв куç хывсан.
Савни, мана ма астаратăн,
Чуна вучахсăр вут хурса?

Çаплах çунать ман вут вучахсăр
Чĕр чĕреме йăлт пĕçертсе.
Куççуль юхтарăп эпĕ саншăн —
Вут сӳнтересшĕн йĕпетсе.

* * *

Çӳлте таса тӳпе,
Çĕр те таса тем пекех.

Юрлать çаплах тăри
Таса чунсемшĕн тетĕр-и?

Таси ăçта вăл халь?..
Тăри, юрла, юрла!
Шанар пуласлăха.

## ЧУН УҪҪИ

*(Шӳт)*

Шăнса ларать
Ҫут пăр пекех;
Ҫук чун ăшши:
Чĕрере сив юн чупать.

Ан кĕт, ан кĕт
Мана текех.
Вĕрекен чĕрене
Ан сивĕтех.

Епле калас?
Эп тиркесен,
Юлăн эсĕ
Тирĕксĕр пекех.

Савни савсан,
Эп — савăшра.
Улах пулмарĕ
Ăшшисĕр сивĕ мунчара!

Лăска-лăска
Лиска йытта,
Чĕре аманчĕ,
Ман чун таҫта.

Чăваш каччи
Пике пекех.
Ун чун уҫҫи —
Каллех эрех.

## АННЕ...

Анне — ҫутă сăмах —
Ҫын чунĕнчи ҫăтмах.
Сана манмастпăр нихăҫан;
Райра ҫӳре — ку тивĕҫ сан.

## ТУПМАЛЛИ

АТТЕ... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Çын . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
Манас çук . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
В кувшине . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çăлтăрсем сӳнме килмеççĕ . . . . . . . . . . . . . . —
Çын чунĕнчи тĕсе куратăп . . . . . . . . . . . . . . 5
Шухăш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пурăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 6
Чĕре юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Пурăнатпăр... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
«Çăханăм» . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
Сарри-тутти... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Паттăр автан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Милиционер . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Чăвашăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Ентеш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Ентешлĕх. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пĕлеймерĕм. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Л.П. Сергеев профессора . . . . . . . . . . . . . 13
Вăйли пулмĕ тарçă . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Тăван . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чĕре кантăк пек . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чĕлхи çынсен... . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Кун-çул . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чăваш — начар мар халăх . . . . . . . . . . . . . 16
Пăлтăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Лĕпĕш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Ют . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Кулăшран . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
«Кăвак хуппи» . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Турă пурах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çич ют . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Кăмăл . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Вăран . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Ялти урам . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пичче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Çырман кунсенче . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Ыйтусем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Шурă ĕмĕт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Кивĕ тусăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Виççĕмĕшĕ ытлашши . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Мелсĕр çĕршывăм . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Хакли никам та çук . . . . . . . . . . . . . . . . —
Ӳкрĕ сивĕ тăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . —

Çĕнĕ кӳме . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Юрату-вăл çутă çăлтăр, çăлтăра тытаймăн нихăçан . . . . . 23
Çĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
Вăхăт мĕншĕн-ши иртет? . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Савни — пурлăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чечек . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Не говори пустые слова . . . . . . . . . . . . . . . . —
Лашасăр пике . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Ай-вай, сăнсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Сан ятупа . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Ирĕк чун. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пĕрне саватăп . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Я ищу тебя . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Юрату вăл хăй пурнасшăн . . . . . . . . . . . . . . . . —
Сана кĕтсе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 29
Ма астартăн? . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çӳлте таса тӳпе... . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чун уççи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
АННЕ... . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —

Клавдия Ивановна Вишневская

**ВĂЙЛИ ПУЛМĔ ТАРÇĂ**

**Сильные духом не падают**

*Стихи на чувашском языке*

Оформление
*К.И. Вишневской* и *А.Ж. Арамян*

экземпляр -500

Подписано к печати 3.03.2000 г. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печ. л. 1,3. Гарнитура Тип Таймс.
Тираж